# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

## Хăватлăн аталанмалли çул-йĕр

**«Сывлăх сыхлавĕ»**

***«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 1 725,9 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 8 проекчĕ пурнăçланать.***

Наци проектне пурнăçлани Раççейре пурăнакансемшĕн медицина пулăшăвне меллĕрех те пысăк пахалăхлă тума тивĕç. Çынсем кашни çулах профилактика тĕрĕслевĕпе диспансеризацине хутшăнни нумай йывăр чире вăхăтра асăрхаттарма пулăшĕ. Малтанхи профилактика тĕрĕслевне çулсеренех çынсен 70 проценчĕ таран явăçтарас задача лартнă. Хальхи вăхăтри клиника сĕнĕвĕсем тата сиплев протоколĕсене çĕнетсе пыни пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвне регионсенче меллĕрех тума парĕ. Медицина ĕçченĕсен квалификацине ÿстерсе пыни отрасле ăста кадрсемпе тивĕçтерме пулăшĕ. Медицина инфраструктурине лайăхлатса пыни, медицина пулăшăвĕн пахалăхне ÿстерни, çынсем хăйсен сывлăхне ытларах тимлĕх уйăрма тытăнни чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене пула тата усал шыçă чирĕсене пула вилнисен шутне чакарма май памалла. Раççейре пурăнакансен пурнăç тăршшĕ 2024 çул тĕлне вăтамран 78 çул патне çывхармалла.

## «Сывлăх сыхлавĕ» Чăваш Енре

**«Здравоохранение» наци проекчĕ шайĕнче Чăваш Енре регионти 7 проект пурнăçланать. Вĕсем çаксем:**

- «Развитие первичной медико-санитарной помощи»,
- «Борьба с сердечно-сосудистыми заболеваниями»,
- «Борьба с онкологическими заболеваниями»,
- «Развитие детского здравоохранения, включая создание современной инфраструктуры оказания медицинской помощи детям»,
- «Обеспечение медицинских организаций системы здравоохранения Чувашской Республики квалифицированными кадрами»,
- «Создание единого цифрового контура в здравоохранении на основе единой государственной информационной системы здравоохранения (ЕГИСЗ)»,
- «Развитие экспорта медицинских услуг».

Çавна май 2019 çулта нацпроектпа палăртнă ĕçсене пурнăçлама пурĕ 2,8 миллиард тенке яхăн уйăрнă.

Медицинăпа санитари пулăшăвĕн пирвайхи сыпăкне аталантарас тĕллевпе республикăра пурĕ 27 çĕнĕ ФАП туса хута янă, 18 мобиллĕ комплекс туяннă.

Усал шыçă чирĕсене пула çынсем вилнине чакарас тĕллевпе Республика онкодиспансерĕ валли хальхи вăхăтри çÿллĕ шайри технологиллĕ оборудовани туяннă: 13 единица – 230 миллион тенкĕлĕх.

Кунсăр пуçне 2019 çулта Территорисем хушшинчи Канашри центрта усал шыçă чирĕсене хирĕç кĕрешме пулăшакан амбулатори центрне туса хунă. Унта пациентсене тĕрĕслеме тата усал шыçă чирĕсене малтанхи тапхăрсенчех сиплемелли, вăл шутра химиотерапипе усă курса та, майсем тунă. 2023 çул тĕлне кун пек центрсем республикăра татах пулмалла.

Ачасен сиплевне меллĕ те пахалăхлă, çав вăхăтрах ачасемшĕн лайăхрах тума нацпроектпа килĕшÿллĕн ача-пăча поликлиникисен, медицина организацийĕсенчи тата ача-пăча больницисенчи ача-пăча поликлиника уйрăмĕсен пурлăхпа техника базине палăрмаллах улăштарса çĕнетмелле. Республикăра ку пысăк ĕçе пурнăçлама тытăннă, çавна май 2019 – 2020 çулсенче 15 медицина учрежденийĕн ача-пăча поликлиникисенче юсавсем туса ирттереççĕ. 2021 çул тĕлне ача-пăча поликлиникисен 95 процентне хальхи вăхăтри требованисене тивĕçтерекен шая çитермелле.

«Чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсене хирĕç кĕрешесси» регион проект шайĕнче 2019 – 2020 çулсенче Республикăри клиника больницин юн тымарĕсен регионти центрне медицинăн тĕрлĕ оборудованийĕпе (пурĕ 161 единица), вĕсен шутĕнче тĕрлĕ томографпа, тивĕçтерме пăхса хунă. Çак тĕллевпе федераци бюджетĕнчен 207 миллион ытла тенкĕ уйăрма пăхнă.

Медицина организацийĕсене ăста кадрсемпе тивĕçтерес тĕллевпе регион шайĕнчи проектпа аслă пĕлÿ паракан вĕренÿ заведенийĕсенче тĕллевлĕ майпа вĕренекен студентсемпе ординатурсене социаллă пулăшупа тивĕçтерме пăхса хунă (3 пин тата 5 пин тенкĕ стипенди). Тĕллевлĕ майпа вĕренме илнисен йышне çулсеренех ÿстерсе пырасси куçкĕрет: министерство сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, 2019 – 2024 çулсенче çапла майпа пурĕ 1188 çынна вĕренме илме палăртнă. Вăл шутра специалитет тата бакалавриат программисемпе – 645 çынна, ординатура программисемпе – 543 çынна, вĕсенчен 149-шне – 2019 çулта, 170-шне – 2020 çулта, малалла – нумайрах.

## Ырă улшăнусем района та çитрĕç



«Здравоохранинение» наци проекчĕн шайĕнче Муркаш районĕнчи сывлăх сыхлав сферинче те ырă улшăнусене курма, туйма пуçларăмăр.

Муркаш район тĕп больницин тĕп врачĕ Николай Кожевников пĕлтернĕ тăрăх, больницăна врачсемпе тивĕçтерес тĕллевпе района ку таранччен «Земство тухтăрĕ» программăпа пурĕ 31 çынна ĕçлеме илнĕ. 2019 çулта район больницинче çак программăна хутшăнакан 1 педиатр тата 1 терапевт ĕçлеме тытăннă. «Земство фельдшерĕ» программăпа усă курса Шурчари фельдшерпа акушер пунктне фельдшера ĕçе илнĕ. Районти ытти хăш-пĕр ФАП-ра фельдшерсем çукран вакансисем пурри пирки заявка панă.

«Здравоохранение» нацпроект шайĕнче Муркаш район тĕп больницине сиплевпе диагностикăн куçса çÿрекен медицина комплексĕпе тивĕçтернĕ. Унăн хакĕ – 7 миллион тенке майлă. Çак комплекспа медицина ĕçченĕсем ялсене тухса çынсене профилактика процедурисене, ЭКГ тĕрĕслевне, ытти хăшпĕр тĕрĕслеве явăçтараççĕ.

2019 çулта Мăн Сĕнтĕрти больницăна ăшăпа тивĕçтерме модуль котельнăйне туса лартнă, ĕçсене 4 миллион та 681 пин тенкĕлĕх пурнăçланă. Пĕлтĕрех Муркаш больницин поликлиникинче, администраци çуртĕнче чÿрече блокĕсене улăштарнă, Мăн Сĕнтĕрти поликлиникăна тĕпрен юсанă.

– Çынсем асăрхарĕç ĕнтĕ, тĕп больницăн стационар çурчĕн пĕрремĕш хутĕнче тĕплĕ юсав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Çавна май эндоскопи кабинечĕсем уйрăм блокпа ĕçлеме тытăнчĕç. Унти условисем те, хĕрарăмсен консультацийĕн уйрăмĕнчи условисем те хăлĕ самай лайăхрах. Юсав туса ирттернĕ хыççăн йышăну уйрăмĕ туллин ĕçлеме тытăнчĕ. Унта талăкĕпех медицина сестрин посчĕ ĕçлет, килекен çынсене йышăнса тĕрĕслекен терапевт пур. Уйрăмри условисем стандарта тивĕçтереççĕ, – каласа парать Николай Кожевников.

Республикăра ача-пăча поликлиникисен тата поликлиникăсен ача-пăча уйрăмĕсенче пурлăхпа техника базине лайăхлатма палăртнă программăпа килĕшÿллĕн Муркашри поликлиникăри ача-пăча уйрăмĕ валли 2 миллион ытла тенкĕлĕх тĕрлĕ оборудовани туяннă.

2020 çулта та пурлăхпа техника базине çĕнетессипе сахал мар ĕç пурнăçлама палăртнине каларĕ тĕп врач. Çапла, сăмахран, поликлиникăри ача-пăча поликлиникин блокне юсаса çĕнетме планланă.

Районти тĕп больница «Демографи» наци проекчĕпе палăртса хунă мероприятисене те ĕçе кĕртсе пырать. Вĕсем çынсен вăтам пурнăç тăршшĕне пысăклатассипе, вĕсене сывă пурнăç йĕркине тытма хăнăхтарассипе çыхăннă. Çапла пĕлтĕрхи кăтартусем малтанхи çултинчен лайăхрах пулнине палăртмалла. Вăл шутра – çынсен вăтам пурнăç тăршшĕ 1 çул таран пысăкланса 71 çулпа танлашнине те.

Районта ача çуралассин кăтартăвĕ çине хĕрарăмсем аборт туни те, ЭКО программа ĕçлени те – кашни хăйĕн витĕмне кÿрет. Çапла специалистсем хĕрарăмсемпе консультацисем ирттернипе пĕлтĕр районта аборт туни те унченхинчен сахалланнă. Çак процедурăна килнисенчен 24 хĕрарăм ачана хăварма килĕшнĕ. Район больници ЭКО программипе те ăнăçлă ĕçлет. Пĕлтĕр района çак программăна хутшăнма панă квота 10 çынпа танлашнă пулсан, çав квотăпа туллин усă курнă.

Сывлăх сыхлав сферинче вăй хуракансем çынсене сывă пурнăç йĕрки тытассинче хăйсем те тĕслĕх кăтартаççĕ: эрнере икĕ хутчен вĕсем больница территорине ирхи зарядкăна тухаççĕ.

**Сăн ÿкерчĕкре: сиплевпе диагностикăн куçса çÿрекен медицина комплексĕнче медицина тĕрĕслевĕ пырать**.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

**Ыйту – хурав**

## Медицина маскин хакĕсем паян тĕрлĕрен

**Юлашки вăхăтра республикăра тата ун тулашĕнче массăллă информаци хатĕрĕсенче медицина маскин дефицичĕ тата хакĕ пирки самай калаçрĕç. Медицина маски – сывлăшпа куçакан инфекци ересссипе кĕрешмелли пĕр хутчен усă курмалли япала. Тухтăрсем сĕннĕ тăрăх, чир-чĕр аталаннă вăхăтра ăна икĕ сехетрен улăштармалла, унсăр çÿрекен чирлĕ çын чир-чĕр сарать, ыттисемшĕн хăрушлăх пулма пултарать.**

Хаçат редакцине Муркашра пурăнакан Олег Тарасов черетлĕ ыйтупа килсе кайрĕ, вăл Муркашри аптекăсенче медицина маскин хакĕ тĕрлĕрен пулнине, 2 тенкĕ те 50 пусран пуçласа 11 тенкĕ таран тăнине палăртрĕ, хаксене тавар чекĕпе çирĕплетрĕ. Тепĕр тесен, пĕр маска хакне илес пулсан, пысăках та мар пек туйăнать. Анчах та чир-чĕр сарăлнă вăхăтра ăна 2 сехетрен мала тăхăнмалла маррине тата чирпе пĕр кун кăна та мар кĕрешмеллине шутласан, ку тĕлĕшпе тăкакланни самай пухăнать.

**Ку ыйтăва Федерацин монополипе кĕрешекен службин Чăваш Республикинчи – Чăваш Енти управленине çитертĕмĕр. Асăннă служба ертÿçин çумĕ Валерий Котеев пире хурав пачĕ:**

– Чăваш Енти Управлени Раççей Федерацийĕн Правительствин ертÿçин çумĕ Т. Голикова ертсе пыракан Раççей Федерацийĕн территоринче çĕнĕ коронавирус инфекцийĕ сарăлассипе кĕрешекен оперативлă штаб ларăвĕн хушăвне пурнăçлассин шайĕнче Чăваш Республикинче вырнаçнă аптекăсенчи медицина маскисен хакĕсем хăпарнине тăтăшах тĕрĕслесе тăрать.

Енчен те маска хакĕ сăлтавсăр ÿснĕ факт пулсан, управлени монополипе кĕрешекен законодательство шайĕнче оперативлă йĕркепе мера йышăнать.

Республикăри кашни çын медицина маскин хакĕ ÿсни пирки УФАС-ăн Чăваш Енти управленине пĕлтерме ирĕклĕ. Заявленире аптека ятне, адресне палăртмалла, пĕрле тавар хакне çирĕплетекен чек пулмалла. Çырăва электронлă мелпе е почта урлă яма пулать, – тенĕ çырура.

Федерацин монополипе кĕрешекен службин Чăваш Республикинчи – Чăваш Енти управленин официаллă сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, аптекăсенчи лару-тăрăва тишкернĕ май, маска дефицичĕ тата хаксене сăлтавсăр ÿстернĕ фактсене тупса палăртман. Мониторинг тăрăх, хаксем 2 тенкĕрен пуçласа 15 тенкĕ таран.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**